Андрей АЛЕКСЕЕВ

# ЧĂВАШСЕН ЫЛТĂН КĔНЕКИ

1

Тăван халăхăн çыруллă культури... Чăвашсем çинчен тĕрлĕ вăхăтра чăвашла е вырăсла çырса кăларнă кашни кĕнекене тăван халăх кунçулĕпе культурин чăн-чăн летописĕ вырăнне хурсах хакламалла. Хамăрăн çыруллă культурăна пултарнă, ăна килес ăрусене халаллама пирĕн несĕлсем ĕлĕк-авалах хăйсен кÿршисемпе тăванлă-хурăнташлă хутшăнура пурăннă. Чăваш халăхĕн авалхипе хальхи культурин паллисем, унăн ăстăнĕпе ăс-хакăл вăйĕ, шухăшлавĕпе пурăнас малашлăхĕ чи малтан чĕлхере, унăн сăмах пуянлăхĕнче, çыру палăкĕсенче палăраççĕ.

1769 çулхи май уйăхĕнче Петербургра Наукăсен академийĕн кĕнеке магазинĕнче «Сочинения, принадлежащие к грамматике чувашского языка» ятлă кĕнеке сутма пуçланă. Ку вăл чăваш чĕлхин XVIII ĕмĕрте пичетленсе тухнă пĕрремĕш грамматики, шкул учебникĕ тата тăван çырулăхпа культурăн чи малтанхи пысăк палăкĕ. Унтанпа 223 çул çитрĕ.

Çак кĕнекере автор ятне те, ăна ăçта тата хăçан пичетлесе кăларнине те кăтартман. Кун пирки тĕпчевçĕсем тĕрлĕрен çырчĕç. Юлашки çулсенче хăшпĕр ученăйсем СССР Наукăсен академийĕн Ленинградри архивĕнче çĕнĕ документсем тупрĕç. Халĕ çакă паллă: кĕнекен алçырăвне Наукăсен академине Хусанпа Сĕве епархийĕн архиепископĕ В. Пуцек-Григорович (1706—1783) ярса панă. 1769 çулхи январĕн 12-мĕшĕнче академин издательство комиссийĕ ăна 608 экземпляр пичетлесе кăларма йышăннă. Май уйăхĕнче кĕнекен пĕтĕм тиражне çапса хатĕрленĕ те Наукăсен академийĕн кĕнеке магазинне сутма илсе тухнă. Çакăн çинчен «Санкт-Петербургские ведомости» хаçатăн майăн 22-мĕшĕнче тухнă номерĕнче пĕлтерÿ те пичетленĕ-мĕн. Унта çапла çырнă: «Академин кĕнеке магазинĕнче тин çеç пичетленсе тухнă çак кĕнекесене сутаççĕ: «Кандид» 30 пус, «О Греции» 20 пус, «Грамматика чувашская» 20 пус...»

Чăваш чĕлхин çак грамматикин авторĕ пирки тĕпчевçĕсем паян кун та татăклă сăмах каламан-ха. Пĕрисем: кĕнекене В. Пуцек-Григорович çырнă пулĕ, теççĕ. Мĕншĕн тесен архив материалĕсем тăрăх, пулас кĕнекен алçырăвне 1769 çулхи январьте Наукăсен академине вăл ярса пани паллă. Теприсен шухăшĕпе, ăна Чулхулари тĕн семинарийĕнче хатĕрленĕ, ăна çырса хатĕрлеме тата редакцилеме семинарире вĕреннĕ, кайран пĕр вăхăт пупра ĕçленĕ Ермей Рожанский чăваш хастар хутшăннă пулать. Çак шухăша тăрăшсах хÿтĕлекенсенчен пĕри — филологи наукисен кандидачĕ В. Родионов литературовед (ЧНИИ кăларнă «Актуальные проблемы чувашской литературы» (1983) кĕнекене тата «Коммунизм ялавĕ» хаçатăн 1989 çулхи январĕн 6-мĕшĕнче пичетленнĕ «Малтанхи чăвашла кĕнеке» статьяна пăхăр).

Хальхи вăхăтра чăваш чĕлхин çак грамматикине Хусанти духовнăй семинарире вĕренекен чăваш ачисем пулăшнипе В. Пуцек-Григорович архиепископах çырнă пулĕ тенĕ шухăш çав-çавах тĕпре тăрать-ха.

Çак йĕркесен авторĕ те чăваш чĕлхин пĕрремĕш грамматикин алçырăвне Хусанта тĕн семинарийĕнче вĕренекен чăваш ачисем пулăшнипе В. Пуцек-Григорович архиепископах хатĕрленĕ тесе шутлать. Çапла çирĕплетсе калама сăлтавсем татах та пур-ха. Чи малтанах кунта грамматика алçырăвне хăш вăхăтра тата кам сĕннипе хатĕрлеме тата пичетлесе кăларма пултарнине шута илмелле пулĕ.

XVIII ĕмĕр Россия пурнăçĕнче пысăк çĕнĕлĕхсемпе палăрса юлнă. Вĕсем уйрăмах патшалăхăн шалти тата тулашри политикинче, халăх хуçалăхĕпе экономикинче палăраççĕ: Пĕрремĕш Петĕр патшан çĕнтерĕвĕсем, унăн культурăпа сутĕçĕнчи реформисем, Петербургра Наукăсен академине уçни т. ыт. те. Иккĕмĕш Кĕтерне патша та çĕршыва нумай çĕнĕлĕх кÿнĕ. Чи малтанах унăн çĕнĕлĕхĕ Россия территорине кĕпĕрнесем çине уйăрнинче тата çутĕçпе культурăра палăрнă. Вăл хăй те литературăпа публицистика, кĕнекепе журнал ĕçне хутшăннă, произведенисем çырнă. Халăхра вăл «нумай вĕреннĕ ăслă майра патша» ятпа çÿренĕ.

Шăпах ĕнтĕ Иккĕмĕш Кĕтерне патшара ларнă çулсенче (1762—1796) Российăри вырăс мар халăхсен историне, чĕлхине, культурине тĕпчесе вĕренес юхăм анлăн сарăлса кайнă та. Хăйне Европăри тата Российăри халăхсен чĕлхисене пĕлесшĕн пулнине палăртса, вăл сĕннипе 1785 çулта Чулхулари тĕн семинарийĕнче Атăл тăрăхĕнчи халăхсен чĕлхисене вĕрентекенсемпе вĕренекенсем «Словарь языков разных народов в Нижегородской епархии обитающих, именно: российская, татар, чувашей, мордвы и черемис...» алçырăвне хатĕрлесе çитернĕ те унăн таса çырнă экземплярне майра патшана хăйнех ярса панă. Хăй вăхăтĕнче çак словаре хатĕрлесси питĕ ответлă та пысăк ĕç шутланнă: унта пĕтĕмпе 11—12 пин чăваш сăмахĕ. Халĕ çав словарь алçырăвĕ Петербургри М. Е. Салтыков-Щедрин ячĕпе хисепленекен библиотекăра упранать.

1767 çулхи çулла Иккĕмĕш Кĕтерне патша Атăл тăрăх курса çÿренĕ. Майăн 25-мĕшĕнче ăна Шупашкарта питех те чыслăн кĕтсе илнĕ. Шупашкарта, Хусанта пулнă чух вăл кĕпĕрнере пурăнакан тĕрлĕ чĕлхеллĕ халăхсен пурнăçĕпе, тĕн сарас тата халăха вĕрентес ыйтусемпе интересленнех, вырăнти влаçсенчен те пулин ыйтса пĕлнех ĕнтĕ чăвашсем çинчен.

1767 çул тĕлне Хусан Атăлпа Кама тăрăхĕнчи халăхсемшĕн самаях паллă культура центрĕ шутланнă: вăл халĕ кĕпĕрнен тĕп хули, унтах тĕн семинарийĕ тата мăнастирсем çумĕнче çĕнĕрен тĕне кĕнисен шкулĕсем ĕçленĕ. Сăмахран, ку вăхăталла тĕн семинарийĕнче вырăс, тутар, чăваш, мари, удмурт, мордва ачисен ятарлă класĕсем пулнă. Кунта çулсерен 40—50 чăваш ачи вĕреннĕ. Хăйсен тăван чĕлхине ан манччăр тесе, вĕсене ытти халăх ачисемпе пачах хутшăнтарман. Çапла майпа XVIII ĕмĕрте (1732—1800 çулсенче) тĕн семинарийĕпе мăнастирсем çумĕнчи шкулсенчен 500 яхăн чăваш ачи вĕренсе тухнă. Вĕсенчен нумайăшĕ кайран чăвашсем пурăнакан прихут чиркĕвĕсенче, кĕпĕрнепе уессенчи патшалăх управленийĕпе администраци учрежденийĕсенче тĕрлĕ должноçра, уйрăмах писарьте, тăлмачра ĕçленĕ. Çавсем пулнă та ĕнтĕ чăвашран тухнă малтанхи интеллигентсем.

Тĕн семинарийĕсемпе мăнастирсем çумĕнчи шкулсенчен вĕренсе тухнă чăваш ачисен йышĕ пысăках мар пулин те, вĕсенчен хăшĕ-пĕри тăван халăхăн çыруллă культурин историйĕнче хăйсен ятлă-сумлă, чыслă ĕçĕ-хĕлĕпе палăрса юлма ĕлкĕрнех. Акă, Хусан тĕн семинарийĕнчен вĕренсе тухнă Никита Бичурин (1777—1853) каярахпа хĕвелтухăçĕнчи халăхсен, уйрăмах Ки-

через — квашня, пичке — бочка, пшалъ — пищаль, преня — бревно, апатъ — обед, тата ытти сăмахсем пур.

Çавăн пекех тата чăвашла-вырăсла словарьте архаизмсем, хальхи чăваш чĕлхинче усă курман сăмахсем те пур: сянъ — тело, сьуксью — порука, сьак — ноша, тяжесть, хось — крест, хрень — коршун, халанадапь — дивлюсь, херенде — край, кюндедель — свидетель, тюря — судья, чопакан — почтарь, тюрь — правило, виримьхоли — ива т. ыт. те. Кĕнекери чăваш сăмахĕсене вулатăн та хăвна ху XVIII ĕмĕрти чăваша курса калаçнăн туйтăн.

Çак кенекепе 67 çул хушши, чăваш чĕлхин иккĕмĕш грамматики (В. П. Вишневский (1804—1885) «Начертание правил чувашского языка». Хусан, 1836) пичетленсе тухиччене, Чулхулапа Хусан епархийĕнчи духовнăй училищĕсемпе семинарисенче чăваш чĕлхи учебникĕ вырăнне усă курнă. 1769—1836 çулсенче вăл чăваш чĕлхине вĕренес текен ытти халăх представителĕсемшĕн те пĕртенпĕр учебник шутланнă. Ку çеç те мар, унпа усă курса, Российăри тата Хĕвеланăç Европăри чылай ученăйсем чăваш чĕлхине малалла тĕпчене. Сăмахран, Шлецер историкпа Гюнтер Валь чĕлхеçĕ XVIII ĕмĕр вĕçĕнчех чăваш чĕлхи тĕрĕк чĕлхисене çывăх тăнине кăтартса панă. Паллă венгр чĕлхеçи С. Диармати пĕрремĕш грамматика материалĕпе усă курса, 1799 çултах Гетинген хулинче чăваш, мари, удмурт, тутар, мордва, пермь чĕлхисен пĕрремĕш танлаштаруллă словарьне пичетлесе кăларнă. Француз историкĕ Левек 1827 çулта Парижра чăваш чĕлхин çак грамматикине, кĕскетсе те пулин, французла куçарса, «Journal Asiatigue» журналта пичетлесе кăларнă. Ют çĕршыв тĕпчевçисем XVIII ĕмĕр вĕçĕнче XIX ĕмĕр пуçламăшĕнчех чăваш чĕлхипе ытă интереслене: вăл авалхи тĕрĕк чĕлхин тăванĕ пулнине, унăн ытти тĕрлĕ чĕлхисем хушшинчи вырăнĕпе хăйевĕрлĕхне палăртнă, хамăртан чылай малтан чăваш чĕлхи ăслăлăхне пуçласа йĕркелесе яма пулăшнă. Канрахпа чăваш чĕлхин пĕрремĕш грамматикипе венгр чĕлхеçисем А. Регули (1818—1858), И. Буденц (1836—1892), нимĕç чĕлхеçисем В. Шотт (1807—1899), И. Аделунг (1826—1889), финн чĕлхеçисем А. Кастрен (1813 — 1852), М. Альквист (1826—1889), тата ыт. те анлă усă курнă. Грамматикăри чăваш чĕлхи материалĕ П. С. Паллас редакциленĕпе 1787—1789 çулсенче пичетленсе тухнă «Сравнительные словари всех языков и наречий» ятлă словаре хатĕрленĕ чух та кирлĕ пулна. Хусан университечĕн профессорĕ М. Казем-бек (1801—1870) хăйĕн «Общая грамматика турецко-татарского языка» (Хусан, 1839) кĕнекине çырнă чух тĕрĕк чĕлхисен грамматика категорийĕсене чăваш чĕлхин пĕрремĕш грамматикинчен илнĕ тĕслĕхсемпе танлаштарса тĕпчене, чăваш чĕлхи финн чĕлхин тăванĕ мар, тĕрĕк чĕлхин тăванĕ пулнине уçăмлăн кăтартса панă.

Пĕрремĕш грамматика чăваш литература чĕлхине аталанма пулăшнине те асăнса хăвармалла. XIX ĕмĕрĕн пĕрремĕш çурринче вырăсларан чăвашла куçарса 20 яхăн кĕнеке пичетлесе кăларнă. Вĕсем тĕн кĕнекисем пулнă пулин те, грамматикăра çирĕплетсе хăварнă сăмахсемпе формăсене малтанхи тăлмачĕсем çыру чĕлхинче çирĕпленнĕ норма вырăнне шутланă.

Чăваш чĕлхин çак 223 çул каялла пичетленсе тухнă грамматики пирĕншĕн, XX ĕмĕрти чăвашсемшĕн, тăван чĕлхене тĕпчесе çырнă чи малтанхи пысăк ĕç пулнипе хаклă. Пит хăвăрт мар пулин те, «Сочинения, принадлежащие к грамматике чувашского языка» кĕнекерен пуçланнă ырă ĕç малашнехи çулсенче майĕпен-майĕпенех чĕрĕлсе-аталанса, хунав ярса, аталанса кайнă-çке-ха. Кĕнекен умсăмахне çыракан автор вулакансене чĕнсе каланипе усăсăр пулман: XIX ĕмĕрте чăваш чĕлхине тĕпчекенсен йышĕ çулсеренех ÿсее пынă, чăваш чĕлхин обществăри вырăнĕпе пĕлтерĕшĕ саралнă май, вĕсен тĕпчевĕсем те таранлансах пынă. «Сочинения, принадлежащие к грамматике чувашского языка» — чăваш чĕлхе вĕрентĕвĕн, пирĕн çырулла культурăн пуçламăшĕ, чи малтанхи кĕнеке.